Таван Ен
Çĕртме, 13, 2024
№ 23 (11272-11273)





Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать



Венера Васильева Костинсен пуян эткерне йышăнать



Кăшавăшри инвалидсен артелĕ

# Музей ĕлĕкхи сăн ӳкерчĕксемпе пуянланчĕ

**Пĕр тăван Костинсем – Чăваш Республикин аталану çулĕн историне унăн тăхăмĕсем валли сăн ӳкерчĕксенче упраса хăварнă фотографсем. Вĕсем чăвашсен пĕрремĕш пичет кăларăмĕсенче ĕçленĕ. Сăмахран – «Красная Чувашия» хаçатра. Хыпарçă страницисенчен пĕрремĕш колхозсем, стройкăсемпе артельсем çинчен чи малтан вĕсем каласа пама пуçланă. Вĕсем хăйсем те пĕрремĕшсем пулнă – чăвашсен пĕрремĕш тата çапçамрăк фотографĕсем.**

## ПУЯН ТУПРА

Вĕсем хăйсем хыççăн калама çук пуян тупра – «Достижения Чувашии. 1927-1931» сăн ӳкерчĕксен альбомне хăварнă. Чăваш гуманитари институчĕн архивĕнчи документаллă кадрсене Владимир Трофимов художник тата коллекционер раставрациленĕ. Вĕсем çине пăхсан икĕ ĕмĕре яхăн каяллахи республика чĕрĕлсе тăнăн туйăнать. Иртнĕ ĕмĕрти вăтăрмĕшсен радиоçыхăнăва, аэроçунасене, глиссерсене кăмăллакан ăстасем, колхозниксемпе рабочисем, журналистсемпе тухтăрсем, хĕрлĕ армеецсем, артистсем вĕсем çинчен пуласлăха пысăк шанăçпа пăхаççĕ. Ишекре Александр Ивановичпа Татьяна Ионовна Костинсен нумай ачаллă çемйинче çуралнă пĕртăвансем сăн ӳкерчĕксен ӳнерĕпе виççĕн кăсăкланнă: асли, 1908 çулта çуралнă Николай тата унран ултă çул кĕçĕнрех Александрпа Георгий йĕкĕрешсем. Пĕрремĕш фотоаппарата аслă ывăлне амăшĕ туянса панă. Вăл унпа шăллĕсене те кăсăклантарса янă. Шăллĕсене кăна та мар, Ишекре сăн ӳкерӳçĕсен кружокне йĕркеленĕ. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăнах фотоательене фотограф вĕренекенĕ пулса вырнаçнă. Çак хушăрах «Канаш» хаçатпа «Сунтал» журналта ĕçлеме пуçланă. Унăн сăн ӳкерчĕкĕсем центрти «Хресчен хаçатĕнче» пичетленме тытăннă. Николай Костин Хусанти Хĕрлĕ Çар çуртĕнче фотографра ĕçлеме пуçласан та унăн ĕçĕсем чăваш хаçачĕсенче курăнсах тăнă. Ăна кура çемьере кĕçĕннисем те Николая вĕрентнĕ ательерех фотограф ремеслипе кăсăкланма пуçланă. Георгий «Канаш» хаçатра тата «Чăвашкино» трестра вăй хунă, Александр вара «Красная Чувашия» (халĕ «Советская Чувашия») хаçатра ĕçлеме пуçланă. «Чувашкино» урлă Георгий районсенче хастар ĕçлесе пынă. Ăна Мускавра иртнĕ фотокорсен слетне хутшăнма та суйласа илнĕ. Александрпа пĕрле районсем тăрăх çӳресе сăн ӳкерчĕксем нумай пухнă. Каярах вара виçĕ пĕртăван пуçтарăннă та «Чăваш Ен çитĕнĕвĕсем. 1927-1931» пысăк фотоальбом хатĕрлесе кăларнă. Заводсемпе комбинатсем çĕкленнĕ, пысăк кĕперсем хунă вăхăтсем, электрификаци тапхăрĕ кăна мар, вĕсенче уявсемпе митингсем, демонстрацисем те сăнланнă.

Николай Костинăн мăнукĕ Ольга Викторовна аслашшĕ çарта ахаль фотокорреспондент пулнă тесе шухăшланă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, çар тивĕçне татнă хыççăн ăна Хусанти офицерсен çуртне ĕçлеме чĕнни пирки мăнукĕ 2018 çулта Шупашкарта пулсан тин пĕлнĕ. Çав çулхи çуркунне кунти патшалăх ӳнер музейĕнче пĕр тăван Костинсен ĕçĕсенчен курав йĕркеленĕ. Унăн аслашшĕ çар пурнăçĕпе çав тери çывăх пулнă: ăна халалланă репортажсене хатĕрлеме Николай Костина шаннинчен тĕлĕнме кирлĕ те мар. Раççейĕн Оборона министерствин сайтĕнчи награда хутĕнчен пирĕн ентеше «Мускава хӳтĕленĕшĕн» медальпе чыслани паллă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче вăл Мускав çывăхĕнчи бомбардирсен 40-мĕш авиаци полкĕнче çапăçнă. Çакăн хыççăн Тĕп командованин Аслă ставкин разведкăллă авиацин виçĕ полкĕнчен пĕрин йышне кĕрет. Николай Костин кунта аэрофотоçĕпе разведка уйрăмĕн фотолаборантĕнче службăна пурнăçлать. Сталинград çапăçăвне хатĕрленнĕ хушăра ку полк оборона позицийĕсене ӳкерме хутшăннă, çĕршыв çарĕн аслă ертӳçи валли районăн пĕрлехи фотокарттине хатĕрлеме те ăна шаннă. Вăрçă хыççăн, 1948 çулта, полк Грецире иртнĕ разведка операцийĕсенче те пулнă. Авиаци штурманĕсем сăн ӳкерме вĕçнĕ. Вĕсене вара Раççей çĕрĕ çинче фотолаборантсем, çав йышра Николай Костин та, кĕтсе илнĕ.

## ПĔР КАДРА ТА СИКТЕРМЕН

2018 çултах пирĕн редакци пĕртăван Костинсене халалласа I республика конкурсне пуçарса ячĕ. Музейре куравпа паллаштарнă хыççăн Алексей Борзов тата Сергей Журавлев фотокорреспондентсем Мускавран килнĕ хăнасене Костинсен çемье архивĕнчен çыртарнă Аслă революцичченхи сăн ӳкерчĕксен дискне парса ячĕç. Костинсен ĕçне тăсакан хастарсем йĕркеленĕ кураври тата Чăваш Ен çитĕнĕвĕсене халалланă альбомри паха сăн ӳкерчĕксемпе малашне пирĕн округра та паллашма май пулĕ. Акă хула валли апат-çимĕç, тырпул тиенĕ «хĕрлĕ лав» Шупашкарти Хĕрлĕ лапампа пырать: Октябрьти революци хыççăнхи сăн ӳкерчĕкре чăвашла çырнине вулама пулать. «Атăл» хăна çурчĕн строительстви, «интернет» тесе палăртнă иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи радиотелефонсем, Совет Союзĕнчи пĕрремĕш аэроçуна линине уçни, Çĕктер завочĕ, Чăвашавтотрансăн Шупашкарти глиссер станцийĕ, Чăвашавтобазин автомобилĕсем çула тухни… – Костинсен фотоаппарачĕсем пĕр кадра та сиктермен тейĕн. Вĕсене пурне те диск çине çыртарса Сергей Журавлев фотожурналист çак кунсенче Ишекри таврапĕлӳ музейне çитерсе пачĕ. Сăн ӳкерчĕксемпе пĕрлех компьютерта Костинсен докуменчĕсен, çырăвĕсен копийĕсем упранĕç. Фотоĕçпе е ентешсен пурнăç историйĕпе кăсăкланакан кашни çын вĕсемпе паллашма пултарĕ. Венера Васильева заведующий музей эткерлĕхне пуянлатма пулăшнăшăн Сергей Витальевича тав турĕ. «Пирĕн музей истори пĕлтĕрĕшĕ енчен калама çук ăнăçлă вырăнта ларать. Унăн çурчĕ ача-пăча савăнăçне те, куççульне те курнă, тăвата теçеткене яхăн çулта вăл чăваш тăхăмĕсене çыхăнтаракан пархатарлă вырăн пулса тăчĕ»,– терĕ Венера Васильевна.



Н. Костин

Сăмах май, 1983 çулта уçăлнă музей çуртĕнче Костинсен йышлă çемйи пурăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче кунта блокадăри Ленинградран эвакуаципе илсе килнĕ ачасем çăлăнăç тупнă. Музей паян хăнасене хăйĕн патне ытларах та ытларах туртать. Çавăнпа та ăна паха экспонатсемпе пуянлатнин усси пурах.

■ Ирина КРАСНОВА



Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсем. Шуркассинчи колхоза кĕме заявлени çыраççĕ

*Страницăра "Достижения Чувашии. 1927-1937" фотоальбомри сăн ӳкерчĕксене усă курнă*